80 çулхи юбилей тĕлне – «Сувар хапхи» курав

Чăваш халăх художникĕ, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ Владимир Агеев 80 çул тултарнă ятпа Шупашкарти ӳнер музейĕнче «Суварские врата» курав уçăлчĕ. Владимир Иванович – ӳнерçĕсем хушшинче чăвашлăхпа палăрнă ăста худоджник. Унăн Пӳлер, Пăлхар, Сăвар хулисемпе тата пĕтĕм чăваш кун-çулĕпе çыхăннă картинисен пĕлтерĕшĕ пирки Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та саламлă çырăвĕнче палăртнă.

Выставкăна уçма халăх йышлă пухăнчĕ. Чăваш Республикин культура министрĕ Роза Лизакова, Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн директорĕ Геннадий Козлов, Раççей Федерацийĕн халăх художникĕ Ревель Федоров, РФ искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Алексей Трофимов, Чăваш художникĕсен пĕрлĕхĕн членĕсем тата тăванĕсемпе юлташĕсем Владимир Агеева чаплă курав уçăлнă ятпа саламларĕç. Чăваш халăх артистки Валентина Музыкантова пиччĕшне унăн картинисем асамлă ачалăха самантлăха та пулин каялла тавăрнишĕн чĕререн тав турĕ, унпа тивĕçлипех мухтаннине пĕлтерчĕ.

Владимир Агеев питĕ ĕçчен çын, çакă ун уявра каланă сăмахĕнче те палăрчĕ: «Выставкăра ман ĕçсен пĕрре çĕрмĕш пайне кăна курма пулать. Тĕрĕссипе вара, графика ӳкерчĕкĕсем кăна – 25 пине яхăн, кулăшпа сатира темипе ăсталанисем – 10 пинрен ытла, живописпе çырнисем – 500 таран. Вĕсем пĕтĕм тĕнчипе саланнă. Ку тĕлĕшпе эп пĕрре те мухтанасшăн мар, ĕçе пĕтĕм вăя тата вăхăта памалла тесе каласшăн çеç. Чăваш культурин пĕр вырăнта тăмалла мар, малалла аталаннăçемĕн лайăхлансах пымалла. Этемĕн тусан евĕр сапаланса пурăнмалла мар, ĕçлемелле».

Хăй мĕнле майпа художник ăсталăхне алла илни пирки Владимир Агеев çапла аса илет. Çураласса вăл 1932 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă.

«Шкула кайичченех пĕр-пĕр япалана пăхса е ахалех кăранташпа ӳкерме пуçланă эпĕ. Çитĕнерехпе, ӳнер искусствине кăштах ăнкарма пуçласан, художник пулма вĕренме пулать-и тесе кăсăклантăм. Пулать иккен, художниксене хатĕрлекен вĕренӳ заведенийĕ пур. Питĕ савăнтăм, вăхăт çитсен тăхтаса тăмасăр экзаменсем пама васкарăм.

1948 çулччĕ ун чухне. Питех те йывăрччĕ. Вăрçă вĕçленни вилçĕмĕш çул: çăкăр, тумтир, ăçта пурăнмалли те çук. Çапах та эпĕ нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр хавхаланса вĕрентĕм, мĕншĕн тесен ӳнер искусствин вăрттăнлăхĕсене пĕлме питех те кăсăклăччĕ мана.

Пĕрремĕш курсра, пĕрремĕш пленэр хыççăн пирĕн ĕçсене пăхса тухрĕç. Н.Д.Мохов преподаватель курава тăратнă ĕçсене тимлĕн пăхса утрĕ, чарăнчĕ, ман ĕçе аллине илчĕ те каларĕ: «Агеев вĕренекен, ӳкерес енĕпе сирĕн ал пырать».

Валентина Ивановна Музыкантова, Чăваш халăх артистки: «Пушă вăхăт тупăнсанах ӳкерме ларатчĕ вăл»

«Эпĕ илем тĕнчинче ӳснĕ. Ачалăхăм хитре пулнă. Чăваш халăх художникĕ Владимир Агеев – манăн пиччĕ. Пушă вăхăт тупăнсанах ӳкерме ларатчĕ вăл. Эпĕ тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсем пĕрин хыççăн тепри картон е катан пир сине килĕшӳллĕн вырнаçнине сăнама юрататтăм. Стенасем çинче пиччĕ ӳкернĕ портретсем, пейзажсем çакăнса тăни халĕ те куç умĕнче, сăрă шăрши те асăмрах-ха. Хам та ачаранах ӳкерме юратнă, юнпа пырать пуль пирĕн ку ăсталăх, ӳкерчĕксем манăн та начар мар пулатчĕç. Анчах та эпĕ вăл çулпа каймарăм, ачаранах артистка пулма ĕмĕтленнĕçке».